25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 МАЙ 9 ШĂМАТКУН 106 (6041) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Суракине ирттерес тĕлĕшпе пысăк тухăçлăхпа тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн, ВКП(б) Калинински райкомĕпе ĕçхалăх депутачĕсен райони Совечĕн исполкомĕ тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине кĕртнĕ:

1. «Красноармеец» колхоз (колхоз председателĕ И. Николаев юлташ). Ир акмалли тĕштырăсене колхоз 5 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ, пĕлтĕр пăхнă 56,5 гектар вырăнне 60,5 гектар акса хăварнă. Оборона фондне хывма тата фашистла пусмăртан ирĕке кăларнă районсенчи колхозсене пулăшу плана колхоз планран ирттерсе 4 гектар акнă. Суталнин те М. Сергеев юлташăн бригади уйрăмах лайăх ĕçленĕ. Вăл ир акмалли тĕштырăсене 4,5 ĕç кунĕнче акса хăварнă. Суракинче Х. Карпова Е. Семенова колхозницăсем фронтри пек ĕçленĕ, вĕсем кашни кунах кулленхи нормăна 125—150 процент тултарса пынă. Колхоз хăйĕн мĕнпур тутăм вăйне хайран ахаль культурăсене акмалли çĕре сухалама тата çĕртме сухарнă. Ирхи çĕртмене 19 гектар сухалнă.

2. «Комбайн» колхоз (колхоз председателĕ А. Федотов юлташ). Ир акмалли тĕштырăсене колхоз 6 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ. Акă ĕçсене агротехника енĕпе пысăк пахалăхпа туса ирттернĕ. Ир акмалли тĕштырăсем акас плана 102 процент тултарнă. Кунсĕр пуçне оборона фондне хывма тата фашистла пусмăртан ирĕке кăларнă районсенчи колхозсене пулăшма планран ирттерсе 3 гектар акнă. Суракинче Е. Филиппова па М. Иванова колхозницăсем лайăх ĕçленĕ, вĕсем кулленхи нормăна 120—125 процент тултарса пынă.

Кунĕк-çĕрĕн акар, фронтри пек ĕçлер!

Республикăри колхозсенче хĕрÿ ĕç вăхăчĕ пуçланчĕ. Пĕрчĕллĕ тырăсене, техникăллă культурăсене вăхăтра тата лайăх акса хăвармалла. Сураки вăхăчĕн кашни сехечĕпе туллин усă курса, халĕ кашни колхозникĕн, колхозницăн, ялхуçалăх ĕçĕнчи кашни работникăн фронтри пек ĕçлемелле.

Нумай колхозсем, уйхирти пĕтĕм лаптăк типсе çитессе кĕтмесĕр, типсе пыракан участоксене суйласа илсе сухалама, акма тытăнчĕç. Машинно-тракторнăй станцисем те кăçал суракине иртнĕ çулхинчен йĕркеллĕрех хатĕрленсе тухрĕç.

Оборона Халăх Комиссарĕн Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнче кăларнă приказĕ республикăри колхозсем суракине массăллăн тухнă тĕле пулчĕ. Сталин юлташăн боевой приказĕпе хавхаланса, нимĕç оккупанчĕсене хăвăртрах пĕтерсе тăкас шухăшпа колхозниксем, колхозницăсем суракинчи ĕçсене пысăк çĕкленÿпе тăваççĕ. Кашни тÿрĕ кăмăллă колхозник, колхозница çак кунсенче хăйĕн пĕтĕм вăйне, пултарулăхне суракине кĕске срокра ирттерес ĕçе хума тăрăшать, стахановла тĕслĕхсем кăтартса ĕçлет.

Калинински районри колхозсем уйрăмах хастарлăн ĕçлеççĕ. Майăн 8-мĕш тĕлне вĕсем пĕрчĕллĕ тырăсене пурĕ 4.242 гектар акнă. Сураки ĕçĕн тухăçлăхĕ кунран-кун ÿсĕлланса пырать. Майăн 8-мĕш тĕлне районри 9 колхоз пĕрчĕллĕ тырăсене акас плана ăнăçлăн пурнăçланă.

Колхозниксен ĕçлес кăмăлĕ пысăк. Суракине агротехникăллă срокра тата пысăк пахалăхпа туса ирттерессипе нумай колхозниксем, уйрăмах колхозницăсем ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Нимĕнле чăрмав уйĕнче те чарăнса тăмаççĕ. Калинински районри Пушкин ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Степанов юлташ), суракине майăн 1-мĕшĕнче тухса, 5 кун çурă хушшинче пĕрчĕллĕ тырăсене акса çитерчĕ. «Красноармеец» колхоз (председателĕ И. Николаев юлташ) пĕрчĕллĕ тырăсем акас плана пысăк пахалăхпа 5 кун хушшинче вĕçленĕ, кун хыççăнах çĕртме сухи тума тытăннă. Çакăн пек ĕçлекен колхозсем районра татах та пур.

Суракине Çĕмĕрле, Вăрнар, Хĕрлĕ Чутай, Вăрмар, Шăхасан районĕсем ăнăçлăн туса пыраççĕ. Майăн 5-мĕш тĕлне пĕрчĕллĕ тырăсене акас плана Çĕмĕрле районĕ 20,3 процент, Вăрнар районĕ 10 процент, Хĕрлĕ Чутай районĕ 13,5 процент, Шăхасан районĕ 12 процент пурнăçланă.

Суракине ăнăçлăн туса ирттересси халĕ тулăм вăйне, тракторсене, колхозниксен пĕтĕм массине ĕçе мобилизацилеме пĕлнинчен килет. Уйхирсен пĕтĕм лаптăкĕ типсе çитессине кĕтмесĕр, уйрăм участоксене сухалама, тырă акас вăхăта пĕр минута та сая ямалла мар. Çакна хăшпĕр районсенчи руководителĕсем ăнланса илесшĕн мар, вĕсем çĕр типсе çитмен тесе лăпланса лараççĕ. Ку вăл уйрăмах республикăн кăнтăр енчи районĕсенче палăрать. Чкаловски, Комсомольски, Елчĕк, Шăмăршă, Первомайски районсем кая юлса пыраççĕ. Ку районсем суракине кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа ирттерес ĕçре çавăрăнăçулăх, пуçарулăх, йĕркелĕх кăтартса ĕçлемеççĕ.

Чкаловски район иртнĕ çулта республикăри хĕрлĕ ялава илме тивĕçлĕ пулчĕ. Кăçал район кая юлса пырать. ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Валеев, райсовет исполкомĕн председателĕ Шарафутдинов юлташсем колхозниксен массине суракине ирттерес ĕçе çитĕнмесĕр мобилизациленĕ. Иртнĕ çул ялхуçалăхĕнчи ĕçсем пысăк пахалăхпа иртнĕ пулсан, кăçал кунта халĕ вăхăт çитмен камарççĕ-ха. «Заря» колхоз машинно-тракторнăй станцинчен трактор килессе шанса суракине кая юлса тухрĕ. Çак вăхăтрах колхоз лашасемпе суракинче усă курассине организацилемен. Тракторпа сухалама çĕр типсе çитеймен. Анчах трактор плугне икĕ касăллă плугсемпе улăштарса суха тăвас ĕçе организацилемен. Лашасене те пурне те ĕçе кÿлмен. Çапла, «Заря» колхоз тырă акмалли хаклă вăхăта ĕççĕр ирттерет.

Çакăн пек тĕслĕхсем Чкаловски районра татах та пур. Партипе совет организацийĕсен суракин малтанхи кунĕсенче пулнă çак çитменлĕхсене тÿрлетмелле, суракине ăнăçлăн ирттерме пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле.

Первомайски, Шăмăршă районĕсем иртнĕ ялхуçалăх çулĕнче те республикăна каялла туртса пычĕç. Иртнĕ çулти ĕçсенчен тивĕçлĕ вывод тумалла пулнă. Анчах кăçал та Шăмăршă, Первомайски районсем суракинче тÿсме çук кая юлса пыраççĕ. Первомайски район майăн 5-мĕш тĕлне пĕрчĕллĕ тырăсене мĕнпурĕ те 66 гектар çеç акнă, тепĕр майлă каласан, район суракин енĕпе республикăра чи кайринче пырать. Çакăн пек кая юлса пынин сăлтавĕ—районри руководительсем ĕç çине большевикла тимлĕхпе пăхманнинче. ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Волков, райсовет исполкомĕн председателĕ Смирнов юлташсен çакăнтан çирĕп вывод тумалла. Суракине тума кашни лашана кÿлмелле, колхозсен пĕтĕм вăйне мобилизацилемелле.

Советски тата Калинински районсен машинно-тракторнăй станцисем хăйсен çук. Сураки планĕсем те вĕсен пĕр майлах. Анчах ку икĕ районăн ĕçĕнче уйрăмлăх питĕ пысăк. Калинински район руководителĕсем кăçалхи суракин кунне уйрăмлăхне, кăçалхи сурака каярах юлса килнине шута илсе, суракине ăнăçлăн ирттерме вăйсене пухнă. Районри кашни лашана сухана тăратнă. Пĕтĕм çĕр лаптăкĕ типсе çитессине кĕтмесĕр, районри колхозсем суракине йĕркеллĕн тума тытăнчĕç. Советски районра ĕçсем йăлтах урăхла. Кунта ĕçе тракторсемпе тăвасси çине ытларах шанса лараççĕ. Майăн 5-мĕш тĕлне районра пĕрчĕллĕ тырă 367 гектар çеç акнă. Ĕçе Калинински районри пекех ăнăçлăн тума районра пур майсем те пур. Лашасем кунта ытти районсенчен ытларах. Сураки ăнăçлăн пулса пыманни руководительсем сÿрĕккĕн ĕçленинчен килет.

Суракине ăнăçлăн туса ирттерес ĕçре ĕçĕн пахалăхĕ çинчен манма юрамасть. Çĕмĕрле районĕнче суракин агротехникине пăснă тĕслĕхсем пур. Уйрăм колхозсем вăрлăхсене çĕр лаптăкне малтан сухаламасăрах е культиваци тумасăрах акаççĕ. Акнă хыççăн сÿрелесе çеç хăвараççĕ. Çакăн пек туни пулмалла мар. Хăвăртрах акмалла, анчах акана лайăх тумалла.

Сиверех тăракан çанталăк малашнехи кунсенче те сураки ĕçне чăрмантарма пултарать. Çавăнпа кашни усăллă сехетпе ĕçре туллин усă курма тăрăшмалла. Кашни лашана сураки ĕçне кÿлес пулать, ăçта трактор хăйĕн плугĕпе сухалама пултараймасть, унта тракторсем çумне лаша плугĕсене кăкарса ĕçлемелле. Трактор вăйĕпе усă курса тата ĕç вăхăтне перекетлесе, агрегатсем организацилесе ĕçлемелле. Агрегата культиваторсем, сÿресем тата сеялкăсем кĕртмелле, вĕсене пурне те трактор çумне кăкарса, ĕçе харăссăн тумалла.

Пĕтĕм вăя халĕ суракине кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа туса ирттерес ĕçе хумалла. Суракине вăхăтра тата пысăк пахалăхпа ирттерни — вăйлă тырпулăн никĕсĕ пулĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Майăн 7-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Майăн 7-мĕшĕнче фронтра нимĕнле пăлă ĕçсемех те пулман.

Майăн 6-мĕшĕнче нимĕçсен 7 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 5 самолет пĕтнĕ.

* * *

Майăн 6-мĕшĕнче пирĕн авиаци часĕсем нимĕçсен войсковой грузсем турттарса пыракан 35 автомашинине, темиçе полевой орудине, 12 минометне, зенитнăй пулеметсен 5 точкине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, чугунул тăрăх пыракан составне çĕмĕрнĕ, противникăн пехотине пĕр ротăна çити саланаса янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Белобородов юлташ командир пулса ертсе пыракан пирĕн часть (Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕ) майăн 7-мĕшĕнче халăх пурăнакан пĕр пункта йышăнса илнĕ те противника чĕрĕ вăйпа техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем кÿнĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче Захватаев юлташ командир пулса ертсе пыракан пирĕн часть противникăн пĕр орудине, минометсен икĕ батарейине, 4 станковăй пулемет тата çар пурлăхĕн складне тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсем 300 çын вилсе юлнă.

* * *

Противник пехотин 2 батальонĕ, 7 танк пулăшса пынипе, Лебедев лейтенант командир пулса ертсе пыракан пирĕн боецсем хÿтĕлесе тăракан позицие атакăланă. Пирĕн красноармеецсем çав танксене хăйсем патне çывхарма панă та, танксене хирĕç пемелли пăшалсенчен темиçе хутчен пĕр харăс пенĕ, вара нимĕçсен 2 машинине çĕмĕрнĕ. Пысăк çухатусем тÿссе, гитлеровецсен каялла чакма тивнĕ. Тепĕр кунне противник татах çĕнĕ атака пуçласа янă, анчах та ку атакăна та противника пысăк çухатусем … пĕтернĕ тăкнă, 14 блиндаж çĕмĕрнĕ тата тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна ытла стройран кăларнă. Танкистсем противникран 50.000 патрон, 8 автомат, темиçе пулемет тата хаклă документсем тытса илнĕ.

* * *

Глушин юлташ командир пулса ертсе пыракан артиллери батарейи (Хĕвеланăç фронтĕ) 2 кун хушшинче тăшманăн 2 блиндаж çĕмĕрнĕ, 2 оруди, грузсем тиенĕ 12 лав тата 100 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăç фронтĕнче противникăн тылĕнче кĕрешекен пирĕн 12 партизана нимĕç салтакĕсен пĕр роти çавăрса илнĕ пулнă. Танмар çапăçу 5 сехет хушши пынă. Лайăх пытанса совет çĕршывĕн чаплă патриочĕсем винтовкăсенчен персе гитлеровецсене пĕрин хыççăн теприне стройран кăларса пынă. Каç пулса çитсен, нимĕçсем каялла чакнă, вĕсен çав çапăçура 34 салтак тата 2 офицер вилнĕ, вĕсен виллисем вăрмантах выртса юлнă.

* * *

Итальянецсен йĕлтĕрлĕ уйрăм батальонĕн 2-мĕш ротинчен тытнă лекнĕ врач Энрико Реджинако çапла ка… ласа кăтартнă: «Пирĕн батальона февраль уйăхĕнче вырăссем малтанхи кун тĕп пулсанах, 50 çын ытла пĕтрĕ, вĕсенчен нумайăшне вĕлерĕç. Унсăр пуçне алă лексен ыттисем шăнса пĕтнĕ. Вырăссем лекнĕ тăкнĕ. Нумай салтака лекнĕ вăйлă салтаксем пĕтнĕ. Вĕсем партизансем вăйлă красноармеецсем хирĕç-раз… ведчик кăна çапăçнине пĕлсен, эпир тĕлĕнсех кайрăмăр».

* * *

Нимĕçсен ефрейторĕ Иозеф Зельгер çумĕнче ун арăмĕ янă çыру тупнă. Çырура çапла каланă: «Апат-çимĕç тĕлĕшĕнчен кунта питех те йывăр. Продуктсем калама та çук сахал параççĕ... Пирĕн фабрикăра вăйлă шушар пулчĕ, çĕнĕ машинăсем нумай çунса кайрĕç... Кунта çапла калаççĕ: Россирен пĕр салтак та киле таврăнаймĕ, теççĕ».

* * *

Вылăх тата ĕç условийĕсем каторгăринчен те начарри Германи промышленноçĕнче ĕçлекен ютçĕршыв рабочийĕсен сывлăхне пĕтерет, вăй-халтан ÿкерет. Март уйăхĕнче Манхейм сывăхĕнчи çар заводĕнче йывăр чирленĕ 120 итальянец баракĕнче йăваланса выртнă. Вĕсене никам та пăхакан пулман, медицина тĕлĕшпе нимĕнле пулăшу та паман. Ютçĕршыв рабочийĕсем завод администрацине çав чирлĕ çынсене васкавлăн киле, тăван çĕршыва яма ыйтнă, итлемесен забастовка пуçласа яратпăр тесе хăратнă. Нимĕçсен влаçĕсем рабочисем мĕн ыйтнине пурнăçа кĕртме пулнă. Темиçе кунран çав чирлесе ÿкнĕ çынсене пурне те Италие янă. Анчах та халĕ çакă паллă пулса тăнă: вĕсенчен никам та киле çитмен пулман.

Майăн 8-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Майăн 8-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле паллă ĕçсемех те пулман.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕн уйрăм участокĕсенче кĕрешекен пирĕн чаçсем икĕ кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 500 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Противникăн çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: 7 оруди, 24 миномет, 52 пулемет, 53 автомат, 130 винтовка, 2 радиостанци, 200 граната, 1.500 мина тата 20.000 ытла винтовка патронĕсем.

* * *

Калининăн фронтĕн уйрăм участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть противникăн контратакине ăнăçлăн сирсе пăрахнă. Çапăçу хирĕнче нимĕçсем 100 виле ытла пăрахса хăварнă. Фронтăн тепĕр участокĕнче Березин юлташ командир пулса ертсе пыракан чаçри артиллеристсем тăшманăн 3 танкне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Кĕçĕн лейтенант Илюхинпа Шувалов старшинан танк экипажĕсем пилĕк кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен 18 дзотне, пулеметсен 24 точкине, танксене хирĕç пемелли 3 орудине, пултăра калибрлă 3 пулеметне пĕтерсе тăкнă тата противникăн боеприпассем хунă складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Погорелов красноармеец танксене хирĕç пемелли пăшалран персе нимĕçсен танкне çĕмĕрнĕ. Çĕрле Погорелов юлташ, Чекмазовпа Филиппов боецсемпе пĕрле, нимĕçсен çĕмĕрнĕ танкĕ ăшне кĕрсе ларнă. Тепĕр темиçе сехетрен гитлеровецсем атака тума тытăннă. Танк ăшĕнче ларакан хаюллă боецсем, тупăпа пулеметсенчен пеме тытăнса, противникăн пехотине пĕр взвода çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Снайперсем Дегтяренкăпа Овчаренко юлташсем темиçе кун хушшинче 27 нимĕçе, снайпер Медведев юлташ — 10 нимĕçе, снайпер Батищев юлташ—6 нимĕçе пĕтерсе тăкнă.

* * *

Партизансен «Дедушка» ятлă отрячĕ, Смоленск облаçĕнче кĕрешекенскер, нимĕçсен фашистла захватчикĕсене ăнăçлăн аркатса пырать. Пĕр эрне хушшинче çав отрядри партизансем 300 гитлеровеца ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Совет патриочĕсем пĕр оруди, 3 миномет, темиçе пулемет, 2 радиостанци тата ытти трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен «СС» дивизийĕн «Дойчланд» полкĕнчи пĕрремĕш ротăран тытăнă лекнĕ ефрейтор Курт Сцедрикис çапла каласа панă: «1942 çулти январĕн пуçламăшĕнче эпĕ маршевăй батальонпа пĕрле фронта килсе çитрĕм. Салтаксенчен чылайĕшĕсем çар ĕçне 6 эрне хушши вĕренсе хатĕрленнĕ. Вĕреннĕ чухне салтаксене батальона Франциех ăсатаççĕ тесе калатчĕç. Вырăссен фронтне янă пирки вĕсем питех те хытă тарăхрĕç, анчах çапах та халлĕхе хăйсен шухăшĕсене уççăнах каласа пама хăяймаççĕ-ха. Нумаях пулмасть вырăссем пирĕн участокра танксемпе вăйлă атака турĕç. Пирĕн рота тÿссе тăраймарĕ, тарма тытăнчĕ. Эпĕ блиндажа ларса юлтăм та вырăссем çывхарса çитсен хам ирĕкпех тытăнă парăнтăм. Мĕн хушрĕ-ха мана çакăн пек тума? Эпĕ вăрçăпа ывăнса çитнĕ, çавăнпа та тек вăрçасшăн мар».

* * *

Тытăна лекнĕ красноармеецсене гитлеровецсем çаплах тискер кайăкла асаплантарса вĕлерсе пыраççĕ. Смоленск облаçĕнчи Чумазово ялĕнче, нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен ирĕке кăларнăскерĕнче, подвалра 12 красноармеецăн виллине тупнă. Виллесем çинче вĕсене тискеррĕн асаплантарнă йĕрсем нумай. Выранта пурăнакан çынсем çапла каласа панă: тытăна лекнĕ красноармеецсенчен гитлеровецсем нумайччен мăшкăлланă, вĕсене хăрушла асаплантарнă, унтан подвала хăваласа кĕртнĕ те пере-пере пăрахнă.

* * *

Польшăри Келецки воеводствин чылай ялĕсенче хресченсен нимĕç оккупанчĕсене хирĕçле восстанийĕсем пулса иртнĕ. Çав восстанисем вырăнти халăха хăйсем пурăннă çĕртен хăваласа кăларнă пирки тата вĕсен çĕрĕсемпе пурлăхĕсене туртса илнĕ пирки пулнă. Хресченсем фашистла чиновникесене тата вĕсене хураллакан полици отрядне пĕтерсе тăкнă. Восстанине пусарма пырса çитнĕ гитлеровецсем çав вырăнсенче пушă ялсем кăна курнă. Çынсем пурте вăрмана тарса пĕтнĕ.

Отечественнăй вăрçă фронтĕнче

Фашистсем танатара

КĂНТĂР-ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, майăн 7-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Çĕрлехи тĕттĕмре тăшманăн сигнал памалли ракети сулăнса кайса сÿнчĕ. Нимĕçсем часах пирĕн позици çине артиллерирен пеме тытăнчĕç.

Нимĕçсем контратакă пуçласа ярассине старшин лейтенант Воскобойников малтанах сиссе илчĕ те тивĕçлĕ мерăсем йышăнчĕ. Воскобойниковăн приказĕ тăрăх Фомичев лейтенантăн подразделенийĕ запасри позицисене ерипен чакса пуçларĕ, çапла майпа вăл тăшмана пирĕн боецсем вырнаçса тăнă çĕре шалалах илĕртсе кĕме шутларĕ.

Фашистсем хăйсен ĕмĕтне пурнăçа кĕртнĕ тесе шутланă самантра сылтăмран та сулахайран та Колесниковпа Лавров лейтенантсен подразделенийĕсенчи боецсем пеме тытăнчĕç.

Фашистсем хăйсем танатана кĕрсе ÿкнине ăнланса илчĕç те каялла ытканчĕç. Анчах та çакă вăл каярах пулчĕ. Фашистсен каялла чакмалли çулне пирĕн пулеметчиксем хĕреслĕ персе тăрса пÿлсе лартнă. Нимĕçсем, хăйсен хĕçпăшалĕсене пăрахса, тарса хăтăлма шутланă. Çапăçу хирĕнче фашистсен салтакĕсемпе офицерĕсен 60 вилли тата аманнисем нумай выртса юлчĕç. Нимĕçсем хăйсен аманнă салтакĕсене çапăçу хирĕнчен пуçтарса кайма та ĕлкĕреймерĕç.

Д. ЩУКИН.

Партизансен Майăн 1-мĕшĕнчи хаçачĕ

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, майăн 7-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Фронт линийĕ урлă пирĕн пата партизансен Ленинград облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенче тухса тăракан хаçачĕн Майăн 1-мĕшĕнчи номерĕ çитрĕ. Хаçатăн икĕ страницинче партизансен боевой ĕçĕсем çинчен, вĕсем гитлеровецсене мĕнле пĕтере-пĕтере тăкни çинчен, тăшмансенчен трофейăсем тыта-тыта илни çинчен каласа панă.

Хаçатра пĕр районри партизансен отрячĕсем çур çул хушшинче мĕнле боевой ĕçсем туни çинчен питех те интереслĕ материалсем пичетлесе кăларнă. Халăхшăн тавăракан паттăрсем çур çул хушшинче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 900 çынна çитиех вĕлернĕ, тăшманăн 7 самолетне, 22 танкне, япаласем турттармалли 85 машинине, 21 çăмăл автомашинине, 49 мотоциклетне, боеприпассем хунă склачĕсене пĕтерсе тăкнă.

Е. КАПЛИНСКИЙ.

ÇАР ĔÇНЕ ВĔРЕНЕÇÇĔ

ШĂХАСАН. Всевобучăн 110 сехетлĕ программине вĕренсе тухнă хыççăн, Ямашри тата Атнашри çамрăксем, 1923 çулта çуралнисем, вăрçăра минометчиксем пулма вунă кун хушши вĕренчĕç. Çавăн пекех çамрăксем пулеметчик пулма та тăрăшса вĕренсе пычĕç. А. Васильев, Г. Васильев, А. Иванов, Р. Барков тата П. Федоров комсомолецсем вĕренÿре паха тĕслĕхсем кăтартрĕç, вĕсем миномет чаçĕсене лайăх пĕлеççĕ, минометпа усă курма та йăлтах вĕренсе çитнĕ.

Г. ШАШКОВ.

* * *

СĔНТĔРВĂРРИ. Педагогикăллă институтри 30 студент çар ĕçне программа тăрăх вĕренсе пĕтерчĕç. Михайлов, Никитин, Николаев юлташсем винтовкăпа пулемета тата граната ывăтас ĕçе лайăх пĕлнине кăтартрĕç.

Институтра хĕрачасем çапăçу хирĕнче аманнисене медицина пулăшăвĕ пама тăрăшсах вĕренеççĕ.

Н. МИЛАШ.

СССР Наукăсен Академийĕн пĕрлехи пухăвĕ

СВЕРДЛОВСК, майăн 6-мĕш. (ТАСС). Паян Наукăсен Академийĕн ирхи ларăвĕнче полномочи срокĕ тухнă пирки СССР Наукăсен Академин президиумне çĕнĕрен суйланă. Вăрттăн сасăласа Академин президентне каллех В. Л. Комаров академике суйланă. Пĕрлехи пухура пулнисем сасăланин результатне итленĕ хыççăн советăн çавтери паллă ученăйне тата патриотне Комаров юлташа саламласа нумайччен алă çупнă. Комаров академикăн ятне, 1942 çулта иккĕмĕш хутчен наукăллă ĕçсен аслă наградине — Сталинла премие илме тивĕçлĕ пулнăскерĕн ятне цивилизациллĕ мĕнпур тĕнче лайăх пĕлет.

Унтан Академин вице-президенчĕсене суйланă. Вице-президентсем пулма В. П. Волгин, Л. А. Орбели, И. П. Бардин, А. Ф. Иоффе, А. А. Байков, А. А. Богомолец суйланнă.

Наукăсен Академин президиумĕн членне А. Н. Бах, В. А. Обручев, Е. С. Варга, И. И. Мещанинов, А. Я. Вышинский, Т. Д. Лысенко, В. Н. Образцов, Н. С. Державин, Э. В. Брицке, А. Е. Ферсман, Е. А. Чудаков, М. Б. Митин, П. И. Степанов тата Н. И. Мусхелишвили академиксем суйланнă.

Пĕрлехи пуху отделенисен академик-секретарĕсем пулма çаксене çирĕплетнĕ: историпе философи отделенин — В. П. Волгин, биологи наукисен — Л. А. Орбели; техника наукисен — И. П. Бардин; физикăпа математика — А. Ф. Иоффе; хими наукисен — А. Н. Бах; геологи-географи — В. А. Обручев; экономика тата право — Е. С. Варга; литература тата чĕлхе наукисен отделенин — И. И. Мещанинов.

Наукăсен Академин пĕрлехи пухăвĕн каçхи ларăвĕнче «Ялхуçалăх наукин хăшпĕр тĕп задачисем çинчен» Т. Д. Лысенко академик доклад туса панă.

«Отечественнăй вăрçă условийĕсенче хĕвелтухăçĕнчи районсенче ялхуçалăх продукцисен тухăçлăхне ÿстермелли майсем» çинчен Д. Н. Прянишников академик доклад тунă.

Ĕç тухăçлăхне ÿстерме тăрăшаççĕ

СĔНТĔР. Апчар ялсоветĕнчи «Сеялка» колхозра Оборона Халăх Комиссарĕн Сталин юлташăн Майăн пĕрремĕшĕнчи приказне илнĕ хыççăнах сÿтсе яврĕç. Çав приказа ăнлантарса панă хыççăн хăйсем çине обязательствăсем илсе, суракинче ĕç тухăçлăхне икĕ-виçĕ хут ÿстерме пулчĕç.

— Оборона Халăх Комиссарĕн Сталин юлташăн приказне пурнăça кĕртес тесен пирĕн «Сеялка» колхоз членĕсен те, ытти мĕнпур колхозниксем пекех, нихăçанхинчен вăйлă тырпул туса илме, фронта ытларах пулăшма тăрăшмалла. «Сеялка» колхозăн кашни гектартан 18 центнер тĕштырă илессине пурнăçа кĕртмелле,—тет колхоз председателĕ Федор Портнов.

«Сеялка» колхоз членĕсем халĕ ĕнтĕ хăйсен обязательствисене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе суракинче фронтри пек хастарлăн ĕçлеççĕ. Пĕрремĕш бригадăри сухаçăсем Ольга Цветкова, Клавдия Исаева, Анна Подшивкина кашни кунах хăйсен ĕç нормисене 120-шер процент тултарса пыраççĕ. Фронтран аманса килнĕ лейтенант Оханкин ертсе пыракан бригада уйрăмах лайăх ĕçлет. Вăл бригадăра Хĕрлĕ Çарти пек çирĕп дисциплина тунă. Ĕçе ирпе 4 сехетре тухаççĕ, каçхине 7 сехетре кĕреççĕ. Çакна май ĕç нормисене виçĕ хут ирттерсе тултараççĕ. Сăмахран, Мария Пегасова, Христина Ефимова, Иван Тайков, Михаил Смирнов юлташсем кунне пĕрер гектар сухалас вырăнне 3,5 гектар сухалаççĕ.

Колхозра «Вăйлă тырпул» ятлă стена хаçачĕ тухса тăрать. Хаçат колхозниксен ĕç дисциплинине юсама пулăшать. Суракинчи стахановецсен ĕçне сутатса пырать. Çав хушăрах кахалсене те критикăлать. Хаçат çине Зоя Гаврилова, Валентина Павлова, Мария Андреева стахановецсен ячĕсене çырнă, унта вĕсен ĕçĕсем çинчен каласа кăтартнă. Çавăнтах Пелагея Кольцовăна вăл пĕр сăлтавсăрах ĕçе тухманшăн критикăланă.

Çапла ĕнтĕ колхоз ĕç тухăçлăхне ÿстерме тăрăшать.

Г. АКИМОВ

Ĕçлеме пултаракан кашни лаша акара пултăр

Социализмлă ăмăрту—ĕçĕн хăвачĕ

Октябрьски районри колхозсенче, бригадăсемпе звеносенче колхозниксемпе колхозницăсем Оборона Халăх Комиссарĕ Сталин юлташ майăн 1-мĕшĕнче панă боевой приказа вулаççĕ. Приказ нимĕç оккупанчĕсене 1942 çулта пĕр сын юлмиччен çапса çĕмĕрсе тĕп тума чĕнет, çак хисеплĕ задачăна ăнăçлăн пурнăçлама çул уçса парать. Сталин юлташăн приказĕнче совет халăхĕн иксĕлми вăйĕ, унăн геройла Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар Флотĕн аслă хăвачĕпе тĕрекĕ курăнса тăрать.

Колхозлă ялхуçалăхĕн ĕççыннийĕсем аслă çулпуçăн Сталин юлташăн приказĕпе чĕререн хавхаланаççĕ, куллен тăрăшса ĕçленипе ăна чыслăн пурнăçлама тупа тăваççĕ.

Пĕтĕм ĕçе социализмлă ăмăртăвăн никĕсĕ çинче туса пырса, районри колхозсем кăçалхи суракине ăнăçлăн тытăнчĕç. Суракин малтанхи кунĕсенчех колхозниксем, уйрăмах колхозницăсем, ĕç тухăçне çÿле çĕклерĕç. Майăн 5-мĕш тĕлне, урăхла каласан, 2—3 кун хушшинче, колхозсем 1771 гектар сухаларĕç, 1008 гектар çине пĕрчĕллĕ тырăсем, 850 гектар çине клевер акрĕç. Колхозниксен ĕçлес кăмăлĕ пысăк, вăл татах та ÿссе пырать. Ĕçĕн ăнăçлăхĕ колхозниксем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарнинчен килет. Кăна тĕслĕхпе илсе кăтартма пулать.

Калинин ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ коммунист К. Шипов юлташ) суракине тĕплĕн хатĕрленсе тухрĕ. Суракинчи ĕçсен калăпăшне пĕтĕмпех тĕплĕн шута илсе, кунта ĕçе çирĕп план тăрăх туса пыраççĕ. Колхозра бригадăсене, бригадăсенчи звеносене тĕрĕс организациленĕ, звеносене уйрăм участоксем çумне çирĕплетнĕ. Кашни звено, бригада, кашни уйрăм колхозник кунта социализмлă ăмăртăва хутшăннă.

Колхоз правленийĕн пуçарăвĕпе колхозниксен пухăвĕ вăйлă тырпулшăн ăмăртса ĕçлекен бригадăсене, звеносене, уйрăм колхозниксене премисем памалла тунă. Пуринчен те пысăкрах тырпул туса илекен бригадăна пĕрремĕш преми — 2000 тенкĕ, тырпул тухăçлăхĕпе иккĕмĕш вырăн йышăнакан бригадăна — 1000 тенкĕ парса премилемелле тунă. Ĕç тухăçлăхне вăйлăн ÿстерсе ĕçлекен колхозниксем валли 500 тенкĕлĕх — 5 преми, 100 тенкĕлĕх — 10 преми тата 5 сысна çури уйăрса хунă. Суракинче паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлекен колхозниксене пусма-гаварсем, шалаварсем, тутăрсем парса премилемелле тунă.

Колхозăн 6-мĕш бригадинче (бригадирĕ П. Шипов юлташ) Сталин юлташăн приказне вуласа тухнă хыççăн колхозниксемпе колхозницăсем кăçалхи уйхир ĕçĕсенче стахановла ĕçлеме, пысăк тухăçлă тырпул туса илсе колхозăн пĕрремĕш премине илмешкĕн тивĕçлĕ пулма сăмах пачĕç. Вĕсен сăмахĕ ĕçпе çирĕп çыхăнса пырать. Кашниех талăкри ĕç нормине пурнăçласа пырать. А. Красильников юлташ сухаланă çĕрте ĕç нормине 120 процент тултарса ĕçлет, сÿре тăвакансем те унран юлмаççĕ.

Колхозри коммунистсемпе комсомолкăсем ĕçре хăйсене тивĕçлĕ вырăн йышăннă, вĕсем социализмлă ăмăртăва пуçарса пыраççĕ.

Комсомолка Анастасия Мельникова — 4-мĕш бригадăн бригадирĕ. Суракине тухнăранпа унăн бригадинчи колхозниксемпе колхозницăсем талăкри ĕç нормине куллен ăнăçлăн тултарса пыраççĕ.

Колхоз майăн 6-мĕш тĕлне пурĕ 173 гектар сухаланă, пĕрчĕллĕ тырăсем 116 гектар акнă. План тăрăх пĕрчĕллĕ тырăсем пурĕ 200 гектара яхăн акмалла.

— Колхозниксен ĕçлес хастарлăхĕ пысăк. Кашни нумайрах тата лайăхрах ĕçлеме тăрăшать. Çанталăк чăрмантармасан, тепĕр 3—4 кунран суракине ăнăçлăн вĕçлеме пултаратпăр, — тет К. Шипов юлташ.

Колхоз сураки планне ăнăçлăн пурнăçланă хыççăн оборона фондне хывма тата нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке тухнă колхозсене тăванла пулăшу пама 6 гектар пăрçа акса хăварма йышăннă.

Суракине ăнăçлăн туса пыракан колхозсем районра сахал мар. Нумай колхозсенче колхозниксемпе колхозницăсем фронтри пек ĕçлеççĕ. Кутемерти «Коммунист» колхозăн сеяльщикĕ Печников юлташ талăкри ĕç нормине 300 процент тултарса ĕçлет. Сÿрелекен Архангельская юлташ та ĕç нормине куллен 300 процента яхăн тултарать. Колхоз оборона фондне хывма планран ирттерсе 11 гектар тырă акса хăварма йышăннă.

И. ДОЛГОВ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

МАЙĂН 7-МĔШ. (Телефонпа).

Вăйпиттисем—килте, ачасем—акара

«Хĕрлĕ паттăр» колхозăн сураки уйне пытăмăр. Колхоз итемĕ патĕнчи участокра 14—15 çулти арçын ачасем ака тăваççĕ. Ака тăвакансем кăна мар, вĕсен лашисем те тин çеç акана кĕнĕ, ака сухине хăнăхса çитеймен çамрăк лашасем. Паллах, ĕçре пиçсе çитеймен çамрăксен ака-сухинче шыйрăксем те тата ытти çитменлĕхсем те пулма пултараççĕ ĕнтĕ. Колхоз председателĕ каласа панă тăрăх, çаксем пек çамрăк ачасем ытти бригадăсенче те пур иккен. Вĕсем пурте пекех туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем, халĕ ак вĕренессе пăрахсах суракине тухнă.

— Сирĕн ĕçлекен аслă çителĕклĕ марнм апла, акана шкул ачисене кăларатăр?—тесе ыйтатпăр колхоз председателĕнчен.

— Ĕçлеме пултаракансем пур та вĕсем... хăшпĕрин ачасем пуррипе тухаймаççĕ, — тет Хураскина юлташ.

Чăнах та, Кĕсĕн Патăрьелĕнчи «Хĕрлĕ паттăр» колхозра ĕç вăйĕ çителĕклĕ иккен. Вăйпитти хĕрарăмсемех килте лараççĕ. Вĕсем хушшинче пĕри те «ĕçе каймастăп» текенни çук. Пурте пекех: ĕçлесчĕ, анчах килте пĕчĕк ачасене никампа та хăварма çук, — тесе пăшăрханаççĕ.

Халĕ колхозра суракипе пĕрлех ытти ĕçсем те тухса тăраççĕ. Итем çинче пĕлтĕр татнă кантăр-пуса купаланса выртать. Ăна халех сурăм туса сыхмалла, тирпейлесе ĕçе ямалла. Паянах çĕрулмине подвалсенчен, нÿхрепсенчен кăлармалла, фермăсене тислĕкрен тасатмалла тата урăх ĕçсем те пур. Анчах кунта та хĕрарăмсене çав пĕчĕк ачасене пăхассинех ĕçе тухма чарать. Пĕтĕм чăрмав — пĕчĕк ачасене пăхакан çуккинче.

Çаксене курсан: мĕн пирки «Хĕрлĕ паттăр» колхозра ача ясли уçман-ши?—тесе ыйтатăн. Е унта яслипе ача сачĕ уçмалли условисем çук-и? Çук мар, пур. Колхозăн пĕчĕк ачасем валли ясли уçма та, ача сачĕ уçма та мĕн кирлĕ, пурте пулнă. Ача пăхакансене те тупма пултарнă. Колхоз правленийĕпе ялсовет исполкомĕ тата районри çĕрĕç отделĕпе сутĕç отделĕ сураки çине сÿрĕккĕн пăхни çеç ĕçе чарса тăрать. Сураки çывхарнă чух вĕсен пурин те ача яслипе ача сачĕ уçасси çине тимлĕн пăхмалла пулнă, ку ĕçе çине тăрсах тытăнмалла пулнă. Ăна халĕ те тума пулать. Ача ясли уçни «Хĕрлĕ паттăр» колхозра нумай хĕрарăма колхоз ĕçĕсене активлăн хутшăнма тата ĕç дисциплинине çирĕплетме май парать. Калас пулать, «Хĕрлĕ паттăр» колхозра ĕç дисциплини халĕ япăх тăрать. Хăшпĕр вăйпитти çынсемех вак-тĕвек сăлтавпа ĕçе тухмасăр тăраççĕ. Сăмахран, майăн 6-мĕшĕнче виççĕмĕш бригадăра 36 çын ĕçе тухмалла пулнă. Вĕсенчен пурĕ те 8 çын çеç тухнă. Тухманнисем хушшинче ĕçрен юриех пăрăнма юратакансем пурри те палăрать. Колхозница К. Хураскина кăçал пĕр ĕçкунĕ те туман, Е. Макарова — 10 ĕçкунĕ çеç тунă. Кун пеккисем ытти бригадăсенче те пур. Паллах, ĕç дисциплинине çирĕп тытса пыманшăн кунта колхоз руководстви айăплă. Халĕ вăл, çав наянсене шеллесе тăрса, суракинче шкул ачисене ĕçлеттерет. Ку тĕрĕс мар япала. Шкулсенче халĕ çуркуннехи пĕлÿ тĕрĕслевне хатĕрленмелли хĕрÿллĕ вăхăт. Вĕренекенсене вĕренÿрен пĕр сехете те уйăрма юрамасть. Колхозсем шкулсенчи аслă класcенче вĕренекенсен вăйĕпе çуллахи каникул вăхăтĕнче çеç усă курма пултараççĕ. «Хĕрлĕ паттăр» колхоз çак йĕркене пăсать.

Районри сутĕç отделĕпе çĕрĕç отделĕн «Хĕрлĕ паттăр» колхозри пек çитменлĕхсене асăрхаса, вĕсене хăвăртрах тÿрлетме тăрăшмалла, айăплă çынсене тивĕçлĕ ответ тыттармалла.

П. НИКОЛАЕВ.

ЧКАЛОВСКОЕ, Майăн 8-мĕш. (Хамăр корр.).

Фронтри пек ĕçлер

ÇЕМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Районри колхозсенче колхозниксемпе колхозницăсем СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «Колхозниксем обязательнăй йĕркепе ĕçлесе тумалли ĕçкунĕсен минимумне ÿстересси çинчен» йышăннă постановление сутсе-явса пĕр кăмăллăн ырларĕç.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăн членĕ Я. Голяшев колхозниксен пухăвĕнче çапла каларĕ:

—Ку постановление эпĕ чĕререн ырлатăп. Пирĕн тăвансем фронтра нимĕç захватчикĕсене хирĕç паттăррăн çапăçаççĕ. Мĕншĕн-ха пирĕн кунта фронтри пек ĕçлес мар. Кашнин икĕ çыннăн ĕçлеме тăрăшмалла. Стахановла ĕçлесен кăна фронта тивĕçлĕн пулăшни пулать. Çак вăхăтра ĕçрен пăрăнса çÿрени преступлени туни пулать. Ун пек çынсене ятламалла кăна мар, çирĕп айăпламалла.

Колхозниксем çав постановление хĕрÿллĕн ырласа йышăнчĕç. Колхоз производствинче кăтарни активлăн ĕçлесе пысăк тухăçлă тырпул туса илессишĕн кĕрешме пулчĕç. Колхоз тырă акмалли çĕр лаптăкне кăçал 10 гектара яхăн анлатать. Ĕлĕк вăрман пулнă вырăна тырă акма хатĕрлемешкĕн йывăç тункатисенчен тасатма апрелĕн 26-мĕшĕнче 50 колхозник ĕçе тухрĕç.

Нумаях пулмасть колхозăн пур бригадисем те суракине пур енĕпе те хатĕрленсе çитсе тухрĕç. Кăçал пĕрремĕш хут плуг алла илсе суха-сÿре тăвакан хĕрарăмсене колхозра организациленĕ семинартан вĕренсе кăларнă.

Англи авиацийĕ Германи çине тата оккупациленĕ районсем çине вĕçсе пырса тапăнни

ЛОНДОН, майăн 7-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Англи авиацийĕ паян виçĕ хутчен çине-çинех Штутгарт хули çине бомбăсем пăрахнă. Майăн 6-мĕш ыран тенĕ чухне çĕрле бомбăсем пăрахнă пекех, халăхинче те Штутгартри тата Кăнтăр Германири ытти пунктсенчи тĕрлĕ объектсем çине тапăннă. Бомбăсене çавăн пекех Нантăри карапсем тăвакан доксем çине тата противникăн оккупациленĕ территори çинчи аэропорчĕсем çине те пăрахнă.

Ĕнер Англи авиацийĕн пысăк соединенийĕсем Çурçĕр Франци çине вĕçсе пырса тапăннă. Кальри электростанци çине, Кальрипе Булоньри тĕрлĕ объектсем çине бомбăсем пăрахнă. Каçхине Çурçĕрти Франци çине иккĕмĕш хут вĕçсе пырса тапăннă. Противникăн истребителĕсем вăйсăр пулнă, сахал çапăçнă.

Германи авиацийĕ ĕнер Англин Кăнтăрти çыранĕнчи хăшпĕр пункчĕсем çине бомбăсем пăрахма хăтланнă. Унтан сиен тата çухатусем нумай пулман.

Румыни партизанĕсем хăюллăн çапăçни

НЬЮ-ЙОРК, майăн 7-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: Румыни партизанĕсем нумаях пулмасть Крайовы патĕнче Германин çар поездне сирпĕнтерсе янă. Нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 70 çын вилнĕ.

Румыни партизанĕсен тепĕр отрячĕ Германи войскисен пĕр штабĕ çине тапăннă.

Çакăн пек тапăнса, икĕ хутĕнче те партизансем трофейăсем тытса илнĕ.

Бузау çывăхĕнче партизансем танксем тиенĕ поезда вут тивертнĕ.

Майăн 1-мĕшне США-па Канадăра уявлани

НЬЮ-ЙОРК, майăн 6-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенчи профсоюз организацийĕсем кăçалхи çул Майăн 1-мĕшне, çар промышленноçĕн предприятийĕсенчи йĕркеллĕ ĕçе чăрмантарас мар тесе, яланхи пек кăнтăрла ирттерес вырăнне, каçхине митингсем туса ирттернĕ.

Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен чи пысăк хулисемпе промышленность центрĕсенчи митингсенче резолюцисем йышăннă. Çав резолюцисенче Европăра иккĕмĕш фронт тума кирлине палăртнă.

Эдмонтон (Канада) хулинчи Майăн 1-мĕш ячĕпе пулнă митингра йышăннă резолюцире çапла каланă: «Эпир Совет Союзĕнчи хамăрăн тăванăмăрсене хĕрÿллĕн саламлатпăр тата хамăр аслă Совет Союзĕпе пĕр шухăш-кăмăллă пулса тăни çинчен пĕлтеретпĕр», тенĕ.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ФРАНЦИ ПАТРИОТНЕ ПЕРСЕ ВĔЛЕРНĔ

ЖЕНЕВА, майăн 6-мĕш. (ТАСС). Германири çар влаçĕсем хушнă тăрăх, Парижăн мухтава тивĕç ывăлне Легалла персе вĕлерни çинчен кунта хыпар илнĕ.

Легалл—Францири профсоюз движенин тата коммунистсен партин паллă деятелĕ.

1941 çулти март уйăхĕнче Париж патриочĕсен руководителĕ пулса нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешнĕшĕн Легалла гестапо арестленĕ.

Журналистсем пĕлтернĕ тăрăх, Париж çывăхĕнчи Клерво тĕрмине хупнă Легалла тискеррĕн асаплантарнă. Темле хаяррăн асаплантарнă пулсан та, вăл Франци халăхĕн шанчăклă ывăлĕн ятне вараламан.

Легаллăн кĕрешес вăй-халне хуçма пултараймасăр гитлеровецсем ăна мартăн 7-мĕшĕнче тул çуталнă вăхăтра асаплантарса вĕлернĕ.

Ăна вĕлернине курнă çынсем каланă тăрăх, Легалл хăй пурнăçĕн юлашки минутисенче те хăйне геройла тытнă. Ăна персе вĕлерме илсе кайнă чухне вăл хыттăн çапла кăшкăрнă: «Тĕп пултăр Гитлер!», «Сывă пултăр Франция!», «Сывă пултăр Сталин!».

„Пуласлăха шанманни, шанчăксăрлăх, кăмăлсăрлăх“

Финсен фашистла хаçачĕсем Финляндири положени çинчен мĕн çыраççĕ

СТОКГОЛЬМ, майăн 6-мĕш. (ТАСС). Финлянди халăхĕн шухăш-кăмăлĕ питех те начар пирки финсен фашистла пичечĕн яланах халăха «ăс-тăнлăрах пулма» чĕнме тивет. Апрелĕн 29-мĕшĕнче «Вапенбрудерн» хаçат çĕнĕрен çакна йышăнать: «Халăх фронтри ĕçсем çине тимсĕррĕн пăхать». «Шалти фронт енчен вăрçăпа интересленнине салтаксене кăтартса, вĕсен шухăш-кăмăлне çирĕплетни кирлĕ. Кÿренмелле те, анчах çав енĕпе нумай ĕçсене туман-ха», тесе çырать хаçат.

Хаçатсем çинче вара «çĕршывра темĕнле шанма çук хĕрарăмсем—шпионкăсем нумай çÿреме пуçлани» çинчен сыхлантарса çырнисене тата «тĕрлĕ йышши сăмахсене вăрттăн саракансене хаçару пулмалла мар» тесе влаçсене сĕнÿ панисене нумай курма пулать. «Влаçсене кăмăла кайман сăмахсене сарма уйрăмах халăх питех те хавасăн пулăшать», тесе çырать «Вапенбрудерн» хаçат.

«Правительствăна хирĕç пыракан вăрттăн оппозици» пуррине йышăнса, «Вазабладет» хаçат апрелĕн 26-мĕшĕнчи умстатьяра Финляндири пропагандăллă ĕçĕн çитменлĕхĕсем çинчен çырнă. «Тăшмана хак памасăр тăни тата унăн ĕçĕсем пĕтĕмпех начар тесе яланах калани» юрăхлă мар, тесе çырать. Çавăн пек пропаганда «пĕр хăлхана кĕрет те тепринчен тухса каять», тет вăл.

Фронтран тарса тухасси вăйланать. Тĕрлĕ хаçатсем çинче: «Юлашки вăхăтра вăрçă инвалидĕсем вăрланисем тата çаратнисем тĕрлĕ хуласенче пулнă», тесе çыраççĕ.

Финляндири положени мĕнли çинчен «Хельсингин саномат» хаçатăн умстаты те лайăх каласа парать. «Юлашки вăхăтра сейм ларăвĕсем час-часах формально кăна пулса иртеççĕ,—тесе çырать хаçат.—Ыйтусене татса парасипе сеймăн влиянийĕ питех те сахал пулнăшăн депутатсем кăмăлсăр». «Питех те кирлĕ ларусенче те депутатсен йышĕн çурри çеç пынине» палăртса, хаçат «пĕр вăхăта сейма пĕтĕмпех салатсан усăллăрах пулĕ», тесе çырать.

Фашистсен пуçлăхĕсем Зальцбургра тĕл пулни пирки

СТОКГОЛЬМ, майăн 7-мĕш. (ТАСС). «Дагенс нюхетер» хаçат хăйĕн умстатьинче Гитлерпа Муссолини Зальцбургра тĕл пулса калаçни пирки çапла çырать: вăрçă материалĕсем туса кăларас ĕçе нимĕçсен хăйсен пĕтĕм вăйне вĕçне çитиччен памалла тивет. Çавăнпа та Гитлер çак вăрçăра Итали вăйĕпе ытларах усă курма тăрăшать.

Гитлерпа Муссолини хушшинче Зальцбургра пулса иртнĕ калаçура, паллах, Итали ыйтăвĕсем пысăк вырăн йышăнса тăнă, — тет малалла хаçат. — Юлашки вăхăтра,—тесе çырать вăл, — Германипе Виши хушшинче «килĕшÿллĕн пурăнма» хăтланнине кура Итали шикленме тытăннă, вăл хăй Францирен Ниццăна, Корсикăна тата Савойăна татса илме ыйтнине нимĕçсем йышăнмĕç тесе хĕрать. Хальхи тапхăрта, Германи итальянецсене вăрçă ĕçĕсене ытларах хутшăнма хушнă чухне, Италин Германие хăйĕн ыйтăвĕсем çинчен астутармалли майлă вăхăт килсе тухнă. Çавăнпа та ĕнтĕ Гитлерпа Муссолини Зальцбургра тĕл пулнинче Италия Ниццăна, Савойăна, Корсикăна хăй çумне хутшăнтарма ыйтнисем паллă вырăн йышăннă.

Черчилль Мадагаскарти вăрçă ĕçĕсем çинчен каласа пани

ЛОНДОН, майăн 7-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Черчилль паян общинăсен палатинче тухса Мадагаскарти вăрçă ĕçĕсем çинчен каласа панă. «Мадагаскарти ĕçсем пирки юлашки хыпарсене,—тенĕ вăл,—эпĕ палата халех пĕлесшĕн пулĕ тесе шутларăм. Мĕнле те пулсан юн тăкас марччĕ тесе, эпир мĕнпур йышши хĕç-пăшал вăйĕсене те йышлăн пухса тăратрăмăр. Çак операцие тума юлашки виçĕ уйăх хушшинче хатĕрлентĕмĕр.

Мадагаскара десант ăнăçлăн антарни çинчен эпир пĕлтернĕччĕ ĕнтĕ. Майăн 5-мĕшĕнче çĕрле пирĕн войскăсем французсен Диего-Суареспа çав пункт умĕнче тата Антсиранăпа Оронтани сăмсахĕсем умĕнче тăракан войскисемпе хирĕç-хирĕç пырса перĕннĕ. Антсирана позицине пирĕн малтанхи хут ĕнер, тул çуталнă чух, атакăланă. Пĕр пин çынна яхăн пĕтерсе, французсем атакăна каялла сирсе янă. Утрав çинчи пирĕн войскăсен командующийĕ, тинĕс пехотин генерал-майорĕ Старджес çĕрле тепĕр хут атакăласа çыран сăмсахне йышăнса илнĕ. Французсен тинĕс çинчи, типçĕрти çарĕсен командованийĕ хăй парăнни çинчен пĕлтернĕ. Диего-Суарес хулине те пирĕн войскăсем йышăнса илнĕ. Паян ирхине пирĕн войскăсем Оронтанири гаване кĕнĕ çĕрте тăракан батарейăсене атакăланă. Французсен кунти войскисем те парăннă. Хальхи вăхăтра икĕ енĕн командованийĕ те килĕшÿ протоколĕсем çыраççĕ. Адмирал Сифрет ертсе пыракан вăйлă флотăн вăрçă операцийĕсене хÿтĕлесе тăракан миннăй тральщиксем халĕ ĕнтĕ хăйсен вырăнĕсене çитсе ĕçе тытăннă. Англи флочĕ гаване паян, Гринвич вăхăчĕпе 13 сехет те 30 минутăра, пырса кĕрессе кĕтеççĕ.

Çак тĕрлĕрен йывăрлăхсемпе çыхăнса тăракан операцисене пирĕн войскăсем питех те тимлĕн тата васкавлă хăвăртлăхсемпе туса ирттерчĕç. Французсем те паттăрри пултаруллăн тата дисциплинăллăн çапăçрĕç. Эпир икĕ çĕршыв войскисем хушшинче, чĕрисемпе пĕр пулса пĕр тăшмана хирĕç тăракан халăхсен войскисем хушшинче, пулса иртнĕ юнлă çапăçу çинчен калатпăр. Анчах та эпир çакна ĕненсе тăратпăр: француз халăхĕ ÿлĕмрен çак çапăçу çине эпир хăйсен çĕршывне ирĕке кăларассишĕн, çав шутрах Эльзаспа Лотарингин çĕрĕсене те Германи пусмăрлăхĕнчен хăтарассишĕн тунă ĕç çине пăхнă пек пăхĕ».

—◦—

Англин Мадагаскарти операцийĕ

ЛОНДОН, майăн 7-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Англи войскисем ĕнер çĕрле Антсирана хулине туртса илнĕ.

Франци тинĕс-çарĕн тата типĕ çĕрти çарĕн Антсиранăри командованийĕ парăннă, анчах утрав çинчи хăшпĕр вырăнта хирĕç тăракансем çаплах пур-ха.

Диего Суарес гаванĕнче юлашки вăхăтра пулнă операцире Виши правительствин подводнăй лодкине тата карапне путарнă.

Халĕ кăна илнĕ хыпарсем тăрăх, англичансем Диего-Суарес тинĕс-çар базине туртса илнĕ. Мадагаскарăн çурçĕрти пайĕнче организованно хирĕç тăма пăрахнă.

Китай çарĕсем Шанхайпа Нанкин çине тапăнни

ЛОНДОН, майăн 7-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Китай çарĕсем Шанхай çине тапăннă. Япони тинĕс çарĕн штабĕ çуртне тата электростанцие чылаях сиенленĕ. Чугунçул линине сирпĕнтерсе аркатнă.

Çавăн пекех Нанкин çине те тапăннă. Вăйлă çапăçусем пынă чухне хулара арсенала сирпĕнтерсе аркатнă. Чугунçул çинчи пилĕк кĕпере çĕмĕрнĕ.

ĔНСЕРЕН ЛЕКТЕРСЕН КИЛĔШМЕСТ ИККЕН

Швейцарин «Журналь де Женев» хаçатĕнче Берлинран илнĕ телеграммăна пичетленĕ. Ăна нимĕçсен цензури ырланă. Акă мĕн вулатпăр эпир çав корреспонденцире:

«Берлинра çурма-официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: Англи авиацийĕ нимĕç хулисем çине бомбăсем пăрахас меслетпе усă тарсан, Германи авиацийĕ Англи хулисем çине бомбăсем пăрахма чарăнать. Кун çумне тата çакна хушма пулать: Германипе Англи авиацийĕсем пĕр-пĕрне хирĕç çапăçни нимĕç халăхне халăн вăхăтра пачах та кăмăла каймасть», тенĕ.

Гитлеровецсем Лондон çине бомбăсем пăрахнине Германире хăй вăхăтĕнче питех те кăмăлланă. Ун чухне мĕнпур фрицсем хушăхсенче ларса, какăра-хăлăра сăра ĕçсе: «Пирĕн бомбăсем питех те тĕл лекеççĕ иккен», тесе суйăнă, трепхенсем вара фугаскăсем çинчен ырă чечексем çинчен каласнă пекех каланă. Халĕ лару-тăру кăштах улшăнчĕ. Фрицсен хулахсенче эрзац-сăра кружкисене çĕклеме май килмест: вĕсем, бомбăсенчен пытанас тесе, çĕмĕрен пекех хÿтлĕхелле вăркăнаççĕ. Трепхенсем вара, англичансен икĕ моторлă самолечĕсен кĕрлевне, бомбăсем шартлатса çурăлнине илтсен, чĕлхесĕрех пулса лараççĕ.

Гитлер ахалех ĕçе урăх çĕрелле пăрса яма хăтланать. Вăл Англин лăпкă та хÿтлĕхсĕр хулисем çине—Йорк, Бат, Эксетер хулисем çине аттан-араан бомбăсем пăрахкаларĕ. Çав вăхăтра англичансем нимĕçсен Росток хулинчи Хейнкель завочĕн сборочнăй цехне, Аугсбургри Мессершмитт завочĕсене, Любекпа Гамбургăн докĕсене çапа-çапа аркатрĕç. Çакăн хыççăн вара вăрçă сасартăках нимĕçсене илĕртме пăрахрĕ. «Пăрахар-ха ку ĕçе...» тесе мăкăртатаççĕ вĕсем. Вĕсем, тăшманăн пĕр самолетне хирĕç хăйсен вунă самолет пур чухне, тÿпене питех те кăмăллатчĕç. Анчах та вăйсем танлашсан вара вĕсем часах именекен пулчĕç. Гитлер: «Вăрçă—вăл пачах та ирсĕр япала» тесе сăмах тухса калаяне те илтĕпĕр-ха эпир. Гудериан генерал «çурма-официальнăй йĕркепе»: танксене пăрахăса кăларсан питех те аван пулнă пулĕччĕ», тесе хăйхăлма тытăнас куна та эпир кĕтсе илĕпĕр. Эсэсовецсем, хăйсен мĕнпур патронĕсене персе пĕтерсе, «тĕп пултăр хĕçпăшал!» тесе çухăрма тытăнас кун та çитĕ-ха.

Фугаскăсем вăтам фрицăн тĕн-пуçне аванах карта ларнаççĕ: сывлăш хумĕсем пăлтăпса ларнă, пуç мимисене тасатаççĕ. Нимĕçсен хулисем çине вĕçсе пыра-пыра тапăнни Англире питех те кăмăллама пуçларĕç. Нимĕçсен «ĕнсерен лектерсен килĕшмест иккен» текен сăмах çуралнă. Çавăнпа та, тен, фрицсем хăйсем ытларах ĕнсерен памаюратаççĕ. Халĕ ĕнтĕ вĕсем, фугаскăсен сассине çителĕклĕ таранах итлесе тăрансан, çийĕнчех темиçе пословица шухăшласа кăларĕç, вĕсен сăмахран çакнашкал пословицăсем шуçĕç: «Ковентри тÿпинче мĕнле, Любек тÿпинче те çавнашкалах», е тата çакăн пек те калĕç: «Кассăра мĕнле, Берлинра та çавнашкалах», теĕç.

ИЛЬЯ ЭРЕНБУРГ.
(«Красная Звезда», майăн 7-мĕш).

Профсоюзсемпе комсомолăн çуллахи кросĕ

ВЦСПС Президиумĕпе ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕ йышăннă тăрăх кăçал профсоюзсемпе комсомолăн çуллахи кросĕ пулса иртмелле.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ пирĕн Чăваш республикинче çуллахи кроса 1942 çулти июнĕн 7-мĕшĕнчен пуçласа июнĕн 21-мĕшĕччен ирттерме йышăннă.

Кроса хатĕрленсе ирттерме оргкомитет тунă. Унта çак юлташсем тăраççĕ: ВЛКСМ Обкомĕн секретарĕ П. М. Михайлов (председатель), ВКП(б) Обкомĕн çарĕç отделĕн заведующийĕ А. П. Рябов (председателĕн заместителĕ), Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председатель заместителĕ К. Е. Евламьев, физкультурăпа спорт комитечĕн председателĕ В. Н. Никишева, «Динамо» спортобществин инструкторĕ Г. И. Нирентштейн, ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн çарĕç отделĕн заведующийĕ Н. И. Чурбанов, спорт мастерĕ М. М. Гущина, медицинăпа санитари ĕçĕнче ĕçлекенсен профсоюз Обкомĕн председателĕ Л. Т. Грачева, электроаппаратура заводĕнчи комсомол комитечĕн секретарĕ В. П. Парполина.

ВКП(б) хула комитечĕсемпе райкомĕсене майăн 13-мĕшĕнчен пая юлмасăр кроса хатĕрленессипе тата ирттерессипе ĕçлекен оргкомитетсем тума хушнă.

ВЛКСМ Обкомĕн, физкультурăпа спортăн республикăри комитечĕн, профсоюзсен Обкомĕсен кроса хатĕрленме халех тытăнас пулать: судейски коллегисене вăхăтра уйăрмалла, тÿрем мар вырăнта чупассипе, районри тата хулари чи ытă чупакана палăртассипе массăллă ăмăртусем ирттермелле; кроса халăхăн анлă массисене хутшăнтармалла.

Кроса хутшăнакансен сывлăхĕсене медицина енĕпе вăхăтра тĕрĕслесе тухмалла.

Государствăна сĕт параççĕ

СĔНТĔР. Фронта апат-çимĕç нумай кирлине шута илсе, Çатракасси ялсоветĕнчи колхозниксем 1942 çулта государствăна аш-какай, сĕт-çу, çăмарта памалли обязательствăсене срокчченех тултараççĕ. Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра 17 çын, «Малалла» колхозра 13 çын государствăна кăçалхи çулшăн сĕт парса татрĕç. «Пионер» колхоз членĕ Т. Сергеев юлташ обязательствăран ирттерсе 30 литр пачĕ. Колхозниксен активлăхне пула 1942 çулта государствăна сĕт памалли обязательствăна Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз 77 процент, «Пионер» колхоз 65 процент тата «Малалла» колхоз 51 процент тултарчĕç.

Д. ИВАНОВ
Çатракасси ялсовет исполкомĕн председателĕ

Хаçатра пичетленсе тухнă материалсем тăрăх

Артельсем начар ĕçлеççĕ

Пирĕн хаçатра кăçалхи апрелĕн 18-мĕшĕнче «Райпотребсоюз суракине хатĕрленет» ятлă заметка пичетленсе тухрĕ.

Асăннă материалра Вăрмар райпотребсоюзĕ суракине хатĕрленес ĕçре тунă çитменлĕхсене кăтартса панă. Çав вăхăтрах çитменлĕхсене те палăртнă. Колхозсем валли урапа сĕрмелли маç, тикĕт илсе килсе хатĕрлемен пулнă. Иртнĕ çулсенче «Универсал» промартель урапа маçĕ тунă пулсан, кăçал вăл ку енĕпе нимĕн те тумасть.

Материал пирки Вăрмар райпотребсоюзĕ çапла пĕлтерчĕ: «Хаçатра тухнă материалра кăтартса панă фактсем тĕрĕс. Чăннипех калас пулать, пирĕн районри артельсем партипе правительство 1941 çулти январĕн 9-мĕшĕнче «Вырăнти чĕртавартан куллен кирлĕ таварсем тата продовольстви тăвассине ÿстермелли мероприятисем çинчен» йышăннă постановленине куллен пурнăçласа пырас тĕлĕшпе нимĕнех те тумаççĕ. Тивĕçлĕ организацисем енчен контроль çителĕксĕр.

Районра урапа сĕрмелли материалсем çуккине шута илсе, райпотребсоюз Канашпа Хусантан 7 тонна маç илсе килчĕ. Суракине отечественнăй аслă вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек хатĕрленсе ирттерме колхозсене пулăшас тесе райпотребсоюз лайăх ĕçлесе пыма пулать».

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чăвашсен Государство Академиллĕ Театрĕ
МАЙĂН
9-МĔШПЕ 10-МĔШĔНЧЕ
ЧĂВАШЛА СПЕКТАКЛЬ
Премьера
Г. Мдивани
Фронта панă приказ
(7 картинăллă пьеса)
Серго ОРДЖОНИКИДЗЕ ролĕнче — Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисчĕ И. О. Молодов.
Каçхине 8 сехет те 30 минутăра пуçланать.
Билетсене сутма пуçланă.

Чувашской Республиканской Конторе
ТОРГБАНКА
требуются на постоянную работу:
старший инспектор и инспектор по кредитованию торговли и кооперации.
С предложениями обращаться в контору Торгбанка по адресу: гор. Чебоксары ул. Карла Маркса, 25, здание Госбанка.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 772 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 268. [illegible]